24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941 ОКТЯБРЬ 30 КĔСНЕРНИКУН 256 (5971) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХĔСАЧĔ.

Хĕрлĕ Çаран высший тата старший начальство составне çар званийĕсем парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăнать:**

Хĕрлĕ Çаран высший тата старший начальство составĕнчи çак çынсене ССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнче кăларнă Указпа çирĕплетнĕ çар званийĕсене парас:

ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНТ ЗВАНИНЕ: Александр Михайлович **Василевскине,** Михаил Степанович **Громадина** парас.

АРТИЛЛЕРИ ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНЧĔН ЗВАНИНЕ: Данил Арсентьевич **Журавлева** парас.

ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ: Иван Сергеевич **Белова,** Арон Гершевич **Карпоносова,** Владимир Васильевич **Курасова,** Федор Иванович **Шевченкона** парас.

АРТИЛЛЕРИ ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ: Антон Владимирович **Герасимова** парас.

АВИАЦИ ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ: Иван Александрович **Викуленкона,** Иван Дмитриевич **Климова,** Николай Алексеевич **Сбытова** парас.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1941 çулти октябрĕн 28-мĕш.

Мĕнпур йывăрлăхсем витĕр—татăклă çĕнтерӳ патне

Совет войскисем нимĕçсен фашистла кĕтĕвĕсене хирĕç тăрса çапăçакан фронт питех те пысăк. Вăл Пăрлă океанран пуçласа Хура тинĕс патне çити сарăлса выртать. Анчах çак фронт вăл ирĕклĕхе юратакан мĕнпур тĕнчери халăхсем гитлерла Германие хирĕç туса пыракан кĕрешӳ фрончĕн пĕр пайĕ кăна.

Разбойник Гитлер хăй умне тĕнчере хуçа пулса тăрас задача лартать. Çак ĕмĕт патне каймалли çул çинче Гитлера хирĕç ССР Союзĕ кăна мар, Англи те, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем те хăйсен çавтери пуян материалла тата чĕре вăй ресурсĕсемпе тăраççĕ. Вăхăт çитĕ, çав ресурссем вĕсем пурте ĕçе кайĕç. Хальхи вăхăтра Германин вăрçă машини вăйлăн хĕссе килнине, нимĕçсен фашистла йыткĕтĕвĕсем талпăнса килнине пирĕн çĕршывăн тӳссе ирттерме лекет. Германи çарĕн командованийĕ Совет Союзне хирĕç хăйĕн çарне пĕтĕмпе пекех, хăй вассалĕсен мĕнпур çарĕсене, хăй авиацийĕн вунă пайĕнчен тăхăр пайне, хăйĕн артиллерийĕне танкĕсене пĕтĕмпе пекех хăваласа килнĕ. Çавăнпа ăнланмалла та ĕнтĕ, гитлерла Германие хирĕç туса пыракан вăрçă Совет Союзĕшĕн çăмăл пулма пултарайманнине. Сталин юлташ вăрçăн малтанхи кунĕсенчех совет халăхне: ĕç пирĕн тăван çĕршывăн пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен пырать, пирĕн тискер те хĕрхенӳсĕр тăшмана хирĕç хаярран тăрса çапăçма лекет, кĕрешӳре хамăрăн мĕнпур вăйсене хурса çапăçни кирлĕ пулать, тесе асăрхаттарнă. Умра сахал мар йывăрлăх пуласси пирĕншĕн палăрнă пулнă. Анчах ССР Союзне хирĕç вăрçă туса пырасси гитлерла çаршăн та литех те йывăр ĕç пулса тăчĕ. Вăрçăн виçĕ уйăхĕ хыççăн Гитлер хăй, Хĕрлĕ Çаран вăйĕсем, Совет Союзĕн вăйĕсем мĕн чухлĕ пулнине тавçăрса илеймен, тесе ирĕксĕрех йышăннă. Шалти йывăрлăхсем ӳссе пынине кура, Европăри чуралантарнă çĕршывсенче Германие хирĕçле движени ӳсе пынине кура, Гитлер хăйĕн октябрьти наступленине тума тытăннă. Вăрçă пирки вилес пек нывăнса çитнĕ Германи халăхне, юн юхтарса халран кайса пыракан Германин çарне Гитлер, темиçе кун хушшинче Мускавпа Ленинграда илетĕп тесе, çапла майпа вăрçа хĕле кĕрinnenех пĕтеретĕп, тесе сăмах панă. Аншăтланнă çилĕпе малалла талпăнса килни тăшмантăн шитех те хакла ларать. Чăн та, тăшман çакăн пек талпăнса килнипе Мускав, Донбасс, Крым, Ростов умне пысăк хăрушлăх тухса тăчĕ. Тăшмана халлĕхе çарса лартайман-ха, Хĕрлĕ Çар геройла хирĕç тăнине тата вăл халăррăн контратакăсем тунине пăхмасăрах, фашистла войскăсем килекен çул нимĕç салтакĕсен вилĕ куписемпе витĕннине пăхмасăрах, тăшман малалла хирĕнсе килет. Çапах та халĕ ĕнтĕ ӳссăнах калама пулать: Гитлерăн ĕмĕчĕсем арканса кайрĕç, мĕншĕн тесен Гитлер çарĕ вăхăтлăха тунă нимĕнле çитĕнӳсем те фашистла Германишĕн хăй кĕтнĕ çĕнтерӳпе мир кӳмеççĕ. Совет халăхĕ Гитлерла Германие хирĕç çĕнтерӳ тăвичченех кĕрешме пирĕн те хатĕр тăрать. Совет халăхĕ хăйĕн вăйĕсене шанать, нимĕнле йывăрлăхсем те унăн çирĕплĕхне хавшатма пултараймаççĕ, нимĕнле çухатусем те унăн хурçа пек çирĕп вăй-хăватне хуçма пултараймаççĕ.

Гитлерла çаран салтакĕсен вăй-хăвачĕпе моральлĕ çирĕплĕхĕ кунран кун хавшаса пырать. Гитлерăн çарĕ халсăрланса пыни юлашки çирĕм кун хушшинче уйрăмах ӳссăн палăрчĕ. Халран кайнă, пыйтланса кайнă гитлерла салтаксем, вăрçăра пысăк çухатусем тӳснине пула, Гитлер татăклă çĕнтерӳ тума тата вăрçа пĕтерме сăмах панине пачах та шанми пуласçĕ. Çакă вăл тыткăна лекнĕ салтаксем кăтартса панинчен курăнать. Тыткăна лекнĕ Эмиль Грин çапла пĕлтерет: «Çĕнĕ наступлени пуçланнă малтанхи кунран тытăнсах салтаксем нумайĕшĕсем шăпи тулнă çынсем пек çӳреççĕ. Манăн яланах çавăн пек туйăм—эпĕ темле тĕпсĕр шăтăка вăркăнатăп пек». Германи фашизмĕ ССР Союзне хирĕç туса пыракан вăрă-хурахла вăрçă нимĕн те парас çуккине ăнланни фронтри нимĕç салтакĕсем хушшинче те, тылри нимĕç халăхĕ хушшинче те ытларах та ытларах сăрхăнса сарăлать. Вăрçă мĕн чухлĕ вăраха тăсăлать,—çак вăрçă вăл вăраха тăсăлакан вăрçă,—гитлерла çаран вăйĕсем çавăн чухлĕ хăвăртрах та хытăрах хавшаса пĕтсе пырĕç. Çав вăхăтрах ССР Союзĕн вăйĕсем, Гитлера хирĕçле коалицин вăйĕсем кунран-кун ӳссе тĕрекленсе пыраççĕ, вĕсем малалла та ӳссе тĕрекленсех пырĕç. Тискер тăшмана хирĕç пыракан хаяр çапăçусенче Хĕрлĕ Çар воинĕсен моральлĕ çирĕплĕхĕ татах та ытларах пиçĕхсе тĕрекленсе пырать, çакă вăл хăйĕн татăклă çĕнтерĕвне шанса тăракан совет халăхĕн моральлĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ иксĕлми хăватлă пулнине кăтартса парать. Темĕнле пысăк йывăрлăхсем тӳсмелле пулсан та, чи йывăр испытанисем витĕр тухмалла пулсан та, пирĕн çĕршывăн тăшмана хирĕç малаллах çапăçса пыма, фашистла йыткĕтĕвĕсене отпор парас ĕçе организацилеме, вăрçа малалла туса пыма, Германи фашизмне пуçĕпех çĕнтерме мĕн кирли пурте пур.

Пирĕн чĕрĕ вăйсен çавтери пысăк резервĕсем пур. Миллионшар совет патриочĕсем хамăрăн тăван çĕршыва юлашки юн тумламĕ юлмиччен хӳтлесе тăма хатĕр. Тăшман хĕвеланăçĕнчи облаçсене, промышленность вăйлăн аталаннă облаçсене, тытса илчĕ. Çакă вăл пысăк çухату. Анчах пирĕн хĕвелтухăçĕнчи районсенче чĕр тавар—кăмăк, тимĕр руди, нефть, вăрман, тĕслĕ металсем, марганец, çĕрмамăкĕ тата ытти япаласене кăлармалли выränсем çителĕклĕ таранах пур. Пирĕн продовольстви—тырпул, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем, пахча-çимĕç, çĕрулми туса илмелли вырăнсем çителĕклĕ таранах пур. Çĕршывăн хĕвелтухăç районĕсенче пирĕн сталинла пятилетка çулĕсенче хăватлăн ӳссе аталаннă вăйлă индустри базисем пур: çĕркăмрăкпе металлургин Уралри тата Çĕпĕрти иккĕмĕш бази, машиностроени вăйлă аталаннă центрĕсем, оборона промышленноçĕн Атăл леш енчи, Уралри, Çĕпĕрти нумай ĕшĕлă предприятисем пур. Пирĕн хĕçпăшалпа боеприпассем туса кăларас ĕçе малалла вăйлантарса пыма вĕçĕ-хĕррисĕр майсем пур.

ССР Союзне Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен тата Англирен килекен танксен, самолетсен тата ытти нумай тĕрлĕ хĕçпăшалсен хисепĕ те уйăхран уйăх ӳссе пырĕ.

Пирĕн чи кирли çакă пур: ылханлă та ирсĕр тăшмана хирĕç эпир вĕçне çитиччен кĕрешме хатĕр тăратпăр, тăван çĕршыва фашистла пусмăрлăхран çăлса хăварассишĕн кирек мĕнле çухату та тӳссе ирттерме хатĕр тăратпăр, гитлерла пусмăрçăсемпе захватчиксене çĕнтерессишĕн кирек мĕнле йывăрлăха та тӳссе ирттерме хурçа пек çирĕп тăратпăр.

Пирĕн тăван çĕршыв умне мĕнле пысăк хăрушлăх тухса тăнине ăнланса илни, совет халăхĕн пурнăçне, пирĕн арăмсемпе ачасен пурнăçне мĕн пек пысăк хăрушлăх хăратса тăнине ăнланса илни совет патриочĕн чĕри тапса тăракан кашни çынннăн вăй-хăватне татах та ытларах ӳстерĕ. Аслă вырăс халăхĕ, ССР Союзĕнчи мĕнпур тăванла халăхсем хăйсен пуçĕсене фашистла ирсĕр вăрă-хурахсем умĕнче нихçан та пĕкмĕç, таймĕç. Гитлерла Германие çапса аркатма, хура-хăмăр чума чирне пĕтерсе тăкма мĕн чухлĕ вăхăт кирлĕ, вăрçă çавăн чухлĕ вăхăта тăсалĕ.

Кĕрешӳ темĕнле йывăр пулсан та, çухатусем темĕнле пысăк пулсан та, умра темĕнле пысăк йывăрлăхсем тăраççĕ пулсан та—татăклă çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!

(«ПРАВДА» умстатьи, октябрĕн 28-мĕш).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç Можайск, Мало-Ярославец, Волоколамск тата Харьков енĕсенче çапăçусем туса пынă. Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен хăшпĕрисенче нимĕçсен фашистла войскисем пирĕн позицисем çине тунă атакăсене Хĕрлĕ Çар чăçĕсем, тăшмана пысăк çухатусем туса, сирсе пăрахнă.

Октябрĕн 27-мĕшĕнче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 31 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 12 самолет пĕтнĕ.

Тĕплĕн палăртнă даннăйсем тăрăх, октябрĕн 27-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсенне малтан пĕлтернĕ пек 8 самолет мар, 20 самолет персе ӳкернĕ.

Октябрĕн 28-мĕшĕнче Мускав патĕнче тăшманăнне 6 самолет персе антарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан пирĕн авиасоединени октябрĕн 27-мĕшĕнче нимĕçсенне 42 танк, 86 бронемашина, вăрçă хатĕрĕсем тиенĕ 430 автомашина, штабсен 32 фургонне тата полевой орудисене 30 ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн пехотин икĕ полкне сапаласа янă тата пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Мало-Ярославец енче çапăçакан Антошкин командирăн авиачăçĕ 5 кун хушшинче нимĕçсенне 97 танк, 510 автомашина, горючи тултарнă 10 цистерна тата тăшманăн салтакĕсене 1300 çын ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фронтĕнчи участоксенчен пĕринче çапăçакан Масленников командирăн чăçĕнчи боецсем хăюллăн тата паттăррăн çапăçаççĕ. Масленников юлташăн боецĕсем юлашки çапăçура фашистсен 8 танкне, боеприпассем тиенĕ 80 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата вăрçă хатĕрĕсем тиенĕ çосавлă 30 автомашинине тытса илнĕ. Çапăçу хирне тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çын ытла вилсе выртса юлнă. Çапăçу пынă вырăнта зенитнăй пулеметсемпе орудисенчен персе, противникăн 6 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла бандичĕсем хăйсем йышăнса илнĕ районсенче мирлĕ граждансене, хĕрарăмсемпе ачасене халĕ те сараташçĕ тата вĕлересçĕ. Белорус ССР Республикинчи Тесна хулинче фашистла влаçсем çаратмашкăн салтаксен кашни ушкăннех уйрăм çуртсем уйăрса кăтартса панă. Усĕр фашистла бандитсем хулара пурăнакансен хваттерĕсенчен мĕнпур япаласене пĕтĕмĕшпех çаратса илсе тухса кайнă. Кивĕ çи-пуçсемпе атă-пушмаксене илсе тухса кайма та чарăнса тăман. Хулара пурăнакан çынсене пĕрмаях пере-пере вĕлерессĕ. Уйрăмăнах лейтенант Клейнкампф питĕ тискер ĕçсем туса пĕтерет, хулари çынсем ăна Тесна хулин палачĕ тесе чĕнессĕ. Çак кунсенче çак ирсĕр бандит икĕ старике нумай вăхăт хушши асаплантарнă хыççăн хулара пурăнакансем чылайăн пулнă çĕрте урамра персе вĕлернĕ. Çаратса тултарнă япаласене тата тĕрлĕрен çимĕçсене Клейнкампф кашни кулленех Германие хăйĕн тăванĕсем патне ярса тăрать.

Киев облаçĕнчи Усовка ялĕнче нимĕç салтакĕсем хресченсене килĕренех ухтарса çӳресе, вĕсенне çи-пуçĕсене тата апат-çимĕçсене туртса илнĕ. Ватă колхозник Степан Шклун хăйне валли кăштах та пулин çăкăр хăварма ыйтнă. Фашистсен офицерĕ çавăнтăн ăна персе йывăр амантнă. Ялтан тухса каяс умĕн фашистсем пĕтĕм килçуртсене тивретсе çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсемпе Виши правительстви тăвакан юнлă террора пăхмасăрах, Францире патриотсен движенийĕ кунранкунах ӳссе пырать. Нумаях пулмасть Амьен таврашĕнче Англипе Канада çарĕ Франции çыранне каçса вырнаçнă тесен хыпар саралнă. Çавăн хыççăн хăйсем тĕллĕнех демонстрацисем пуçланă. Нимĕçсене хирĕç пынă вăрçă вăхăтĕнче пытарса юлнă хĕçпăшалсене алла тытма пуçланă. Патриотсем Амьен çывăхĕнче вырнаçнă нимĕçсен çарĕн штабне çĕмĕрсе тăкнă. Вăрçă ĕçне пачах та пекех вĕрентмен салтаксенчен—стариксемпе çамрăксенчен тăракан, вăрçăра пулса курман салтаксенчен тăракан фашистла гарнизон патриотсен движенине аран-аран çеç путарса лартма пултарнă. Октябрь уйăхĕн варринче Франции патриотсем Эр каналĕ тăрăх пыракан, танксем валли кирлĕ чăссем тиенĕ баржăна сирпĕнтерсе янă. Вăрçă хатĕрĕсем тиенĕ поездсене крушени тăвасси çĕршывра тăтăшах пулса пырать. Нумаях пулмасть Парижран Труана каякан эшелона ӳпĕнтерсе янă.

Октябрĕн 29-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 29-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем Можайск, Мало-Ярославец, Волоколамск тата Харьков енĕсенче противника хирĕç çапăçусем туса пынă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр авиачасть виçĕ кун хушшинче нимĕçсенне 27 танк, боеприпассемпе тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тиенĕ 135 автомашина, 14 противотанковăй тупă, 7 йывăр оруди тата миномĕтсен 5 батарейине пĕтерсе тăкнă. Пысăк калибрлă бомбăсем тĕл пăрахса, боеприпассен пысăк складне сирпĕнтерсе янă. Пулеметсенчен персе тата бомбăсем пăрахса, тăшман пехотин пĕрре те çурă батальонне пĕтерсе тăкнă. Сывлăшпи çапăçусенче çак часть виçĕ кун хушшинче 6 «Мессершмитта» персе антарнă.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енче çапăçакан пирĕн часть нимĕçсен 336-мĕш пехотинăй полкне хирĕç тунă пĕр çапăçура халăх пурăнакан тăватă пункта тытса илнĕ. Чаçăн боецĕсем нимĕçсенне 15 танк, пехота ларса пыракан 50 автомашинăна пĕтерсе тăкнă тата хирти артиллерин 5 орудине тытса илнĕ.

* * *

Майор Бабенко командир пулса ертсе пыракан танксен соединенийĕ Хĕвеланăç фронтĕнчи пĕр участокри çапăçура нимĕçсен 12 танкне тата противникăн темиçе вуншар салтакне пĕтерсе тăкнă. Капитан Шевелев командир пулса ертсе пыракан танксен тепĕр группи тĕп çапăçура нимĕçсен 11 танкне стройран кăларнă. Çав çапăçура кĕçĕн лейтенант Харанов уйрăмăнах палăрнă, вăл противникăн темиçе танкне пĕтерсе тăкнă.

Фашистсене хирĕç пыракан çапăçусенче Лавриненко лейтенантăн танковăй экипажĕ паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă. Çак кунсенче Лавриненко юлташăн танкĕ нимĕçсем çине кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Орудисемпе пулеметсенчен персе, тăшманăн пехотине пĕр батальона çити, штаб машинине, 10 мотоцикл, противотанковăй оруди тата миномĕтсем, автоматсемпе пулеметсем нумай пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи икĕ районри партизансен отрячĕсем октябрĕн малтанхи çуруйăхĕнче нимĕçсен боеприпассемпе продовольствисем тиенĕ 29 автомашинине, 7 танкне, 3 бронемашинине, бензин тултарнă 2 автоцистернине, противникăн 17 лавне, 3 противотанковăй тупăсене тата пĕр радиостанцине пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех фашистсене хирĕç çапăçса партизансем нимĕçсен 312 салтакне тата 19 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Заводсенчен пĕрinчи цех начальникĕ Г. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ пуринчен те ытларах ӳсĕм тунă. Вунă кун хушшинче çак отряд нимĕçсен 60 салтакне тата 5 офицерне, 3 автодрезина, Германи çарĕн фронтри чăсĕсене валли тĕрлĕ груз тиенĕ 17 вагона пĕтерсе тăкнă. Чылай вырăнсенче партизансем çыхăну линийĕсене нумай километрсем хушшинче татса тухнă. С. ялĕнче партизансен отрячĕ Германи влаçĕсем уйăрса лартнă старостăна Николаева, ĕлĕк жандарм пулнăскерне, ярса тытнă. Николаев фашистсен аллине ялти активистсене тытса панă, партизансемпе çыхăну тытакан ялти çынсене йĕрленĕ. Предателе çакса вĕлернĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

ЭЛĔК. Районра Хĕрлĕ Çара ăшă тумтирсемпе пулăшас ĕç анлăн сарăлса пырать.

Тени ялсоветĕнчи колхозниксем 38 тир, 68,7 килограмм çăм, алшăшсемпе перчаткăсем 24 мăшăр, 10 мăшăр носки, 7 ăшă кĕпе, 52 алшăлли, çăм тата пир портянкăсем 38 мăшăр, 5 мăшăр çаматă, 15 çĕлĕк панă.

Колхозсенчен ăшă тумтирсем пухас енĕпе Тениле Малти Хирлеп колхозсем малта пыраççĕ. Ку колхозсенче кашни колхозник пĕрер е икшер япала панă.

В. КАРПОВ.

* * *

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Баймашкинăри инвалидсен артелĕн членĕсем, хăйсем сукăр пулсан та, Хĕрлĕ Çар валли ăшă япаласем чылай пачĕç. Скворцов юлташ совет воинĕсем валли ăшă тумтир хатĕрлеме икĕ тир, 400 грамм çăм тата пĕр мăшăр портянкăна алшăлли пачĕ. Фондеркин—пĕр тир, 400 грамм çăм, алшăлли, Юмшаков — пĕр тир, 300 грамм çăм пачĕç. Хĕрарăмсем колхоз панă çăмран алшăшсемпе чăлхасем сыхаççĕ. В. Иванова — пилĕк мăшăр алшăш, тăватă мăшăр чăлха, Е. Лукьянова — пилĕк мăшăр алшăш, икĕ мăшăр чăлха, Е. Пахомова — ултă мăшăр алшăш, М. Филиппова — икĕ мăшăр алшăш, пĕр мăшăр чăлха сыхса панă.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Халăх чĕринчи патриотизм туйăмне куллен хăватлантарса пырар!

Нумай миллионлă совет халăхне паян пĕр аслă патриотизмлă туйăм, пĕр ĕмĕт пĕтĕçтерсе тăрать. Пире хăйĕн мĕнпур пуянлăхĕсемпе ырлăхĕсене уçса панă социализмлă тăван çĕршыва гитлерла тискер-кайăксенчен çăлса хăвармалла! Çĕршывăн анлă талккишĕсем çинчен ирсĕр фашистсене—чĕрриксене те, вилнисене те—шăлса ывăтмалла! Ан вараллаччăр вĕсем пирĕн таса çĕрсене!

Тăван çĕршыва юратни—совет çыннин чи пысăк та чи таса туйăмĕ. Совет çынни хăйĕн тăван çĕршывне пĕтĕм чун-чĕререн юратать. Мĕншĕн тесен тăван çĕршыв ăна—ирĕклĕхпе чыслăх, пурнăçпа телей панă. Социализмлă тăван çĕршыв хăй талккишĕнчи нумай тĕрлĕ нацисене çĕнĕрен чĕртсе ура çине тăратрĕ. Нумай тĕрлĕ халăхсен ĕмĕрхи пусмăрлăх айĕнче таптаннă пултарулăхĕсемпе таланчĕсем уçăлчĕç, тĕнче курман хастарлăхпа творчествăлла ĕçе тытăнчĕç. Совет влаçăн çирĕм тăватă çулĕ хушшинче Совет Союзĕнчи халăхсем алла-аллăн тăрса ĕçлесе хуçалăхра, культурăра, наукăпа искусствăра тĕлĕнмелле пуянлăхсем турĕç. Пурте вĕсем совет çыннин чĕришĕн çавтери халлă, çавтери паха. Мĕншĕн тесен çав пуянлăхсем вĕсем—халăх ĕçĕ, халăх тарĕпе юнĕ.

Çавсене пурне те акă çынçиен Гитлер хăваласа килнĕ йыткĕтĕвĕсем таптаса аркатасшăн. Броньăпа витĕннĕ тискер кайăксен кĕтĕвне хирĕç аслă совет халăхĕ богатырь пек, улăп пек тăрса хаяр çапăçăва тухрĕ.

Совет халăхне кĕрешӳре хăват кӳрсе тăракан çăлкуç вăл—совет патриотизмĕ. Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратни, халиччен этемлĕх курман аслă патриотизм совет çыннисене отечественнăй вăрçă фрончĕсенче, тылри ĕç фронтĕнче тĕлĕнмелле геройла ĕçсем тума çулăмланса кайнă. Патăр совет патриочĕсен аслă çарĕ, фашизма хирĕç тăватă уйăх ытларах çапăçса, темиçе миллионшар гитлеровецсен пуçĕсене çĕр çумне пăталаса хучĕ. Совет хулисен хӳмисем çуллĕ, вĕсен урлă тăшманăн хăй виллисене купаласа çуллĕ сăртсем тумасăр каçма çук.

Анчах та урса кайнă тăшман ниме те ӳраса тăмасть. Гитлерăн юнлă çарĕ малаллах талпăнса килме чăрсăрланать. Тăшман пирĕн çĕршывăн пурнăç центрĕсене—Мускава, Харькова, Донбаса, Ленинграда хăратса тăрать.

Отечественнăй вăрçăн аслă çулăмне, совет халăхĕн кĕрешӳри вăй-хăватне, унăн патриотизмĕпе хаярлăхне татах та ытларах çĕклемелле. Тăшман малалла хирĕнсе кĕрессине чарса лартма, ăна халь йышăнса тăракан рубежсенче çапса аркатма халăхăн мĕнпур вăйне мобилизацилемелле.

Совет халăхĕ хальхи вăхăтра çапла çулăмланса ĕçлет те. Вăл хăйĕн патриотизмне çĕр тĕрлĕ, пин тĕрлĕ ĕçре кăтартса парать.

Çĕршыври тăванлă ытти халăхсем пекех, пирĕн чăваш халăхĕ те, аслă çулпуç Сталин юлташ кăтартса панă пек, йăлтах фронта валли, йăлтах хамăрăн çĕнтерӳ валли текен лозунга пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. Чăваш халăхĕн пиншер ывăлĕсем Хĕрлĕ Çар ретĕнче, тăван халăхсен ывăлĕсемпе юнашар тăрса, социализмлă çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн çапăçаççĕ. Вĕсен нумайĕшĕн ячĕсем халлĕхе палламар-ха, анчах ӳлĕм вĕсем çинчен чаплă юрăсем сыпăнĕç, çав юрăсем ĕмĕрсене юлĕç.

Чăваш республикинчи предприятисемпе колхозсем хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ йĕркепе урăхлатса çĕнетсе çитереççĕ, вĕсем фронта валли ытларах та ытларах продукци парса пыраççĕ. Рабочисемпе колхозниксем—чăн-чăн совет патриочĕсем—тăван çĕршывăн нимĕн те хĕрхенсе тăмасçĕ, вĕсем çĕршыв мĕн ыйтнине пурне те туса пама хатĕр. Предприятисенчи рабочисен ĕç тухăçлăхĕ кунран-кун ӳссе пырать. Çĕмĕрле комбинатĕнчи рабочи В. Краснощеков хăйĕн август уйăхĕнчи планне 193 процент тултарнă пулсан, сентябрь уйăхĕнче вăл 265 процент тултарнă, халĕ октябрь уйăхĕнче кунсерен виçшер норма туса пырать. Çавăн пекех К. Липатов комсомолец та август уйăхĕнче плана 167 процент, сентябрьте 241 процент тултарса пынă, халĕ вăл куллен 250—260-шар процент тултарса пырать. Çав комбинатрах паллă стахановец Большаков октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн малтанхи кунах плана 410 процент тултарнă, халĕ вăл çак виçене малашне те тытса пырассишĕн кĕрешет.

Октябрьти Социализмлă Аслă революцин çирĕм тăваттăмĕш уявне рабочисемпе колхозниксем производствăри çĕнĕ çĕнтерӳсемпе кĕтсе илеççĕ. «Большевик» заводри рабочисем кашни цеха двухсотниксен цехĕ туса хурассишĕн кĕрешеççĕ. Куйта фронта кайнă рабочисен станокĕсем умне красноармеецсен арăмĕсем тăнă. А. Роткина, А. Никитина, А. Богачева тата ытти нумай работницăсем технологин йывăр процесне кĕске вăхăтрах алла илсе, халĕ хăйсен ĕç нормисене 120—150-шар процент тултарса пыраççĕ.

Патриотизм туйăмĕ ĕççыннисем хушшинче çĕр тĕрлĕ пуçарулăх суратать. Пирĕн республикăри ĕççыннисем çĕршывăн оборона фондне укçан кăна 2 миллион тенкĕ ытла хывнă. Республикăн столицинчи—Шупашкарти патриотсем яланхи пекех çак ĕçре те малта пыраççĕ, вĕсем оборона фондне укçан 447 пин тенкĕ хывнă. Çавăн пекех ку енĕпе Канаш, Çĕмĕрле районĕсенчи ĕççыннисем те пысăк хастарлăх кăтартса параççĕ. Именкасси шкулĕнчи (Красноармейски р.) учитель-орденоносец А. Иванов çемьи çĕршыв обороннине тĕреклетме, укçан панисĕр пуçне, 2.020 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă. Çакăн пек тĕслĕхсене çĕршер те пиншер кăтартса пама пулать. Вăрçăн йывăр вăхăтне пăхмасăрах, перекет кассисен фончĕсем куллен ӳссе пыраççĕ. Вăрнарти перекет кассине вăрçă пуçланнăранпа ĕççыннисем çĕнĕрен 198.925 тенкĕ хунă.

Тăван республикăри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсене ăшă кĕрĕксем, çăматăсем, ăшă çĕлĕксемпе алшăшсем тăхăнтарса тумлантарассишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Халăхпа Хĕрлĕ Çар хушшинчи çыхăну тĕлĕнмелле ăшă та паха. Нумаях пулмасть Кӳкеç поселокĕнчи хĕрсем икĕ хут орденлă Н-ски дивизи боецĕсем валли ăшă япаласем хатĕрлесе янă пулнă. Фронтри боецсем çав парнесене илсен, хавхаланса çакăн пек çыру çырса янă:

«Сирĕн парнесене пирĕн чăсри чи лайăх çынсене—отечественнăй вăрçăн геройĕсене патăмăр. Парнесенчен чи пахине сирĕн земляк—пулеметчик Иванов илчĕ. Эпир хăвăрăн землякупа мухтанма пултаратăр—вăл чăн-чăн герой. Хăйĕн пулеметĕпе вăл çĕр фашиста ытла пĕтерсе тăкнă».

Мĕнле кăна паха ĕç тумаççĕ пирĕн çулăмлă патриотсем! Вĕсем всевобуч подразделенийĕсенче Хĕрлĕ Çаран патăр воинĕсем пулма вĕренеççĕ: вĕсем кашни кану кунĕнче воскресниксене тухса ĕçлеççĕ; вĕсем донорсем пулса хăйсен юнĕсене амăннă боецсем валли параççĕ; вĕсем ĕçре çĕнĕ меслетсем шухăшласа кăлараççĕ, çĕнĕ изобретенисем туса оборона хăватне тĕреклетеççĕ.

Халăх Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшать, пĕтĕм вăйне пама хатĕр тăрать. Партипе совет, комсомолпа профсоюз тата обществăлла ытти организацисен совет халăхĕн патриотизмлă туйăмне татах та ытларах хăватлантарса пыма, ĕççыннисен пуçарулăхĕпе тавçăрулăхне Сталин юлташ хушнă пек ертсе пыма тăрăшмалла, ĕççыннисем хушшинчи массăллă-политикăллă, организаторла ĕçе, агитацине пропаганда ĕçне вăйлатмалла.

Фронтра çĕнтерӳ тăвассишĕн, фашистсен гитлерла юнлă йыткĕтĕвĕсене пуçĕпех çапса аркатассишĕн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешекен халăх халхи вăхăтри мĕнпур политикăллă ыйтусем пе интересленет. Партипе совет, комсомолпа профсоюз организацийĕсен совет патриочĕсем ыйтнине кирлĕ пек тивĕçтерсе пымалла. Коммунистсемпе комсомолецсен, советпа профсоюз активĕсен ĕççыннăи массисен чăн-чăн организаторĕсем пулмалла. Çакă вăл яланах кирлĕ пулнă, çакă вăл уйрăмах халĕ, вăрçă условийĕсенче, кирлĕ.

Республикăри малта пыракан предприятисемпе колхозсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва вăйлатса пыраççĕ. Пирĕн çак ăмăртăва пĕтĕм халăх ăмăртăвĕ туса хумалла. Халăх фронта пулăшассишĕн мĕнпур

ОТЕЧЕСТВЕННАЙ ВĂРÇАН ГЕРОЙĔСЕМ. **Укерчĕк çинче:** Хĕрлĕ Çар командирĕсен труппи. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн вĕсенсе Совет Союз Геройĕн званине панă. Сулахайран сылтăмалла: майор С. Г. Гетьман, кĕçĕн лейтенант С. И. Здоровцев, капитан В. Г. Тихонов, старший лейтенант Л. И. Иванов, капитан Л. В. Михайлов, кĕçĕн лейтенант М. П. Жуков тата лейтенант К. Е. Анохин.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Колхозри парторганизацин ĕçĕсем

Хумпуç Патăрьелĕнчи (Йĕпреç р.) «Правда» колхозри пуçламĕш парторганизаци отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетсе чылай лайăхлатрĕ, халь вăл пур ĕçе те вăрçă интересĕсене пăхăнтарса туса пырать. Парторганизаци коммунистсен пухăвĕнче сӳтсе-явса çирĕплетнĕ план тăрăх ĕçлет.

Хальхи вăхăтра колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пырасси уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав ĕçе тивĕçлине туса пымасăр хуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă пурнăçлама май çук. Пуçламĕш парторганизаци, çакна шута илсе, политикăллă тата агитациллĕ-массăллă ĕçе ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлес тата государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарас задачăсемпе сыхăнтарса туса пырать. Çакна вăл агитаторсенчен тытăннă, вĕсен йышне тĕплĕн пăхса тухнă тата вĕсене уйрăм участоксем, бригадăсем çумне çирĕплетнĕ.

Агитколлективра пурĕ 15 çын. Агитколлектива пуçламĕш парторганизаци секретарĕ А. Синдячкин юлташ хăй ертсе пырать. Вăрçă пуçланнăранпа агитаторсене пухса 6 хутчен канашлу ирттернĕ. Вăл канашлусенче тĕнчери лару-тăру çинчен, Германи пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнни, вăрçă ĕçĕсем мĕнле пыни тата агитаторсен задачисем, Ленин ячĕпе тăракан фабрика коллективĕ чĕнсе калаçнине т. ыт. ыйтусене сӳтсе-явнă.

Агитаторсене пухса çавăн пек канашлусем ирттерни вĕсене хăйсен ĕçне чăннипех вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пыма пулăшнă. Вăрçă пуçланнăранпа докладсем 23 хутчен, каласусем 26 хутчен ирттернĕ, вăл докладсемпе каласусене 1536 çын итленĕ. Кунсăр пуçне уборка вăхăтĕнче кашни бригадăра вулавçăсем ĕçленĕ, вĕсем уйра ĕçлекен колхозниксем патĕнче кашни кун пулса, хаçат-журналсем вуласа панă, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсем çинчен каласа панă, колхозниксене тылра та фронтри пек ĕçлеме мобилизациленĕ, социализмлă ăмăртăва сарса пыма пулăшнă. Ĕçе çавăн пек организациленипе колхозниксем ĕç нормине куллен 150—200 процент тултарса ĕçленĕ. Октябрĕн 1-мĕшне уйри тырпулсене пĕтĕмпех пухса хĕртнĕ. Уборка вăхăтĕнче бригадăсенче 9 номер стена хаçатĕ кăларнă.

Уборка пынă вăхăтрах çар ĕçне вĕренессине организациленĕ. Халăха сывлăпран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма хăнăхтарас тĕлĕшпе ПВХО кружокĕнчен 101 çын вĕрентсе кăларнă. Самозащита групписем организациленĕ.

Колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх туса пыни колхозниксемпе колхозницăсене Совет Союзăн оборона фондне тума тата Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе активлăн хутшăнтарма пулăшнă. Колхозниксем оборона фондне 7,41 центнер тырă тата заем облигацийĕсем нумай панă. Кунсăр пуçне пĕр ĕçсӳнĕ çине тивекен тупăша кашни уйăхрах оборона фондне парса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 25 тир, 11,5 килограмм çăм т. ыт. ăшă япаласем пухса панă.

Хуçалăхлă-политикăллă задачăсене пурнăçа кĕртес çĕрте уйрăмăнах Антонина Цветкова активлăн хутшăнать. Вăл хальхи вăхăтра ăшă тумтир пухса парассипе ĕçлет. Коммунист-агитатор А. Цветкова юлташ—туллимар вăтам шкулта учительница. Вăл вĕрентекен класс шкулта примерлă классенчен пĕри. Çавăнпа та ĕнтĕ совет правительстви ăна «За трудовую доблесть» медалĕ парса наградăланă.

Пуçламĕш парторганизаци ялсовечĕпе тата колхоз правленийĕпе таччăн сыхăнса ĕçлет.

Çавăн пекех, парторганизаци колхоз производствин ертсе пыракан кадрне тĕреклетес енĕпе те пысăк ĕçсем туса пырать. Парти членĕ К. Карпов юлташ рядовой колхозник пулнă, халĕ вăл колхоз правленийĕн председатель заместителĕ. Хăйне шанса панă ĕçе чыслăн пурнăçласа пырать.

Пуçламĕш парторганизацин ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Колхозниксем хушшинче ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Çавăн пекех, хăшпĕр коммунистсем обществăллă-политикăллă ĕçе çителĕксĕр хутшăнаççĕ. Агитаторсем те пурте мар лайăх ĕçлеççĕ. Парторганизацин кашни коммуниста партиллĕ-политикăллă ĕçе активлăн явăстармалла.

Дм. МИХАЙЛОВ.

Счетоводсен курсĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Районра колхоз счетоводĕчĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе курс организациленĕ. Курсра 35 çын вĕренет, вĕсенчен 33-шĕ хĕрсем.

Хĕрарăм кадресем, счетовод квалификацине илнĕ хыççăн, фронта кайнă арçынсем вырăнне ĕçлеме пуçласçĕ.

А. КОСОЙКИН.

Патриоткăсем

ÇĔМĔРЛЕ. **(«Чăваш Коммуни» корр.).** Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXIV çул тултарнине древкомбинатра ĕçлекен хĕрарăмсем тăван Хĕрлĕ Çара шулăпшас ĕçе татах та вăйлатнине кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Кашни станочница, кашни работница çак вăхăтра хăйĕн ĕçне мĕнле те пулсан лайăхлатма, пысăкрах та пысăкрах çитĕнӳ тума тăрăшать.

7-мĕш номерлĕ цехри Наталия Вашуркина ертсе пыракан бригада (бригадăра 6 çын) иртнĕ уйăхра хăйне панă плана ялан икшер хут иртнĕрсе тултарнă, халĕ вăл 2,5 хут иртнĕрсе тултарать.

Вашуркина юлташ бригадипе юнашар Пелагея Утехина ертсе пыракан çамрăксен бригади вырнаçнă. Ку бригадăра та ĕç нормине тултарманнисем çук, пурте пысăк çĕкленӳпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Çавăнпа бригада кашни çуннах плана 200—220 процент тултарать.

Древкомбинатăн ытти цехĕсемпе участокĕсенче те нормăна икшер хут тултаракан хĕрарăмсем сахал мар. Сăмахран, 6-мĕш номерлĕ цехри мастер Леонтьев юлташ ертсе пыракан сменăри хĕрарăмсенчен çурри ытла кулленхи ĕç нормине икшер хут иртнĕрсе тултараççĕ. Стахановкăсем Лапшова, Вострикова, Киреева, Емельянова т. ыт. юлташсем те октябрь уйăхĕ пуçланнăранпа кашни кун тенĕ пекех 200—250 процент, уйрăм кунсенче 300 процент тултарса ĕçлерĕç. Стахановка Аксенова (унăн упăшки Хĕрлĕ Çар ретĕнче) куллен 3-шер норма туса, пĕтĕм коллектив умĕнче мухтава тухрĕ, октябрĕн 21-мĕшĕнче вăл кулленхи нормăна 330 процент тултарчĕ.

Татьяна Курмаева, Анна Самышкина, Анна Очкина комбината ĕçлеме кăсал сентябрь уйăхĕнче пырса вĕнĕ. Вĕсем пурте тĕплĕн, тăрăшса ĕçленипе технологи процесне часах вĕренсе çитнĕ. Халĕ вĕсене ответлă участоксене тăратнă пулсан та, куллен нормăна 130 процент таран тултарса пыраççĕ. Патриоткăсем арçынсем ĕçленĕ специальноçсене хăвăрттăн вĕренсе çитеççĕ. Хальхи вăхăтра уйрăмăнах столяр-сборщик пулса ĕçлекенсем хушăнса пыраççĕ. 2-мĕш номерлĕ цехри учетчица Кутыркова юлташ (комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕ) сборкăра ĕçлеме кăмăл турĕ. Вăл ĕç технологине хăвăрт вĕренсе çитрĕ, халĕ нормăна ытлашшипех иртнĕрсе тултарать.

Производствăри хĕрарăмсен ĕçри хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем куллен кун производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тăвас шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ.

Х. ЛИСИН.

Пĕрремĕш выпускăн итогĕсем

ИЙПРЕÇ. Çар ĕçне вĕренесси района ăнăçлăн пырать. Октябрĕн 18-мĕшĕнче ялсенчи вĕренӳ пунктĕсенчен малтанхи сменăсем вĕренсе тухнă. Туçари вĕренӳ пунктĕнчен пурте вĕренсе тухнă. Стройпа сӳреме, винтовкăран, минометран, пулеметран пеме, танксене хирĕç кĕрешме, граната ывăтма, кучухнехи вăрçăн йывăр обстановкинче çапăçма вĕреннĕ. Тактикăллă занятисенче кашни боецăн винтовка, граната тата сапернăй кĕреçесен макечĕсем пулнă.

Вĕренӳре çирĕп дисциплинăпа кĕрешессине уйрăмах малти вырăна хунă. Вĕренӳн малтанхи кунĕсенче хăшпĕрисем дисциплинăна пăснă. Вĕсем пирки командовани тивĕçлĕ мерăсем йышăннă хыççăн, дисциплинăна пăсакансем урăх пулман. Кашни боец хăйне çар çынни пек тыткалама пуçланă. Çар ĕçне пурте тăрăшса вĕреннĕ, кашниех занятисене кăтартнă вăхăтра çитнĕ.

Çар ĕçне 44 çын «отлично» паллăсемпе вĕренсе тухнă. Командовани вĕсене тав тунă. Боецсем хушшинче Р. Магасевпа М. Семенов коммунистсем тата П. Егоров комсомолец уйрăмах палăрса тăраççĕ. Вĕсем винтовкăн материальнăй чаçĕсене, кучучнехи вăрçă техникине отлично вĕреннĕ.

— Пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентмелле тунине эпир ырлатпăр. Халиччен эпир çарĕç техникине пачах пĕлнĕ пулсан, халĕ вăра лайăх вĕренсе çитрĕмĕр. Алла винтовка тытса тăшмана хирĕç çапăçма паян тесен паян хатĕр эпир,—тесçĕ вĕсем.

Кашни боецах тăшман сывлăпран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕреннĕ, ПВХО значокĕн нормине панă. Чылайăшĕ ворошиловла тăл пеме вĕреннĕ. ПВХО ĕçне вĕрентессипе шкул директорĕ А. Анисимов тата Н. Тихонова юлташсем тăрăшса ĕçленĕ. Вĕсем икшĕшĕ те ПВХО инструкторĕсем. Шкул вĕренӳ пунктне пысăк пулăшу парса тăрать. Вĕренӳре кирлĕ учебниксене шкултан илнĕ. Учительсемпе шкул ачисем боецсем валли итĕ хутчен постановка лартса панă.

Вĕренӳ пунктĕ вырнаçнă клубра çар кĕтесĕ уçнă. Унта плакатсем, лозунгсем çакăнса тăраççĕ, çар ĕçне вĕренмелли кĕнекесем те çителĕклĕ. Вăл кĕнекесемпе çар ĕçне вĕренекенсем усă кураççĕ. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, боевой эпизодсене хăшни кун пĕрлешсе вулаççĕ, хăшни кун ирпе тата каçхине политинформацисем ирттернĕ. 4 номер стена хаçатĕ кăларнă. Политинформацисем, докладсемпе калаçусем ирттернă вĕренӳ пахалăхне ӳстерме, дисциплинăна çирĕплетме пулăшнă. Ĕçе çавăн пек организациленине пула Туçари вĕренӳ пунктĕ малтанхи сменăна лайăх вĕрентсе кăларчĕ. Ку вăл вĕренӳ пунктĕн начальникĕ Н. Теплов, комиссар П. Козлов юлташсем тăрăшса ĕçленипе пулнă.

Çак вĕренӳ пунктĕнче 85 çынна çĕнĕрен Осоавиахим членне илнĕ. Осоавиахим членĕсем пурте тенĕ пекех 1941 çулăн член ухăсне парса тăтнă. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса парас ĕçе те лайăх организацилеленĕ. Çав ĕçе 83 çын хутшăннă, вĕсем тир, çăм, ăшă алшăш, носки, çĕлĕк, тăла тата ытти япаласем пухса панă.

Вĕренӳ пунктĕнче вĕренекенсем колхозсене уйăхри ĕçĕнче пулăшнă. «Красный металлист» колхозра 43 гектар сĕлĕ çулнă, 54 гектар çинчен çыхса пухнă, 274 лав кĕлте туртнă, 340 лав капана хывнă—пĕтĕмпе 361 ĕçкунĕ тунă. Çав 361 ĕçкунне тивекен тупăша пĕтĕмпех оборона фондне хывма йышăннă.

Туçари вĕренӳ пунктĕ Çĕнĕ Чурашри вĕренӳ пунктĕпе ăмăртнă. Ăмăртура Çĕнĕ Чурашри вĕренӳ пунктĕ те юлса пымарĕ. Вĕренекенсем пурте ПВХО значокĕн нормисене панă. Ручной пулеметчиксем нумай хатĕрленĕ. 65 çынна çĕнĕрен Осоавиахим членне илнĕ. Политикăллă ĕçе лайăх организацилеленĕ. Кашни кун политинформацисем, докладсем, каласусем ирттернĕ, 4 номер стена хаçатĕ кăларнă.

Ку вĕренӳ пунктĕнче вĕренекенсем колхозсен уйăрĕнче ĕçлесе 766 ĕçкунĕ тунă, çав ĕçкунĕсене тивекен тупăша оборона фондне пама пулнă.

Д. М.

Сывлăшран тапăннинчен сыхланма пурне те вĕрентмелле

Сывлăшран тапăннинчен сыхланма вĕрентес ĕçе Шупашкар хулинчи пур учрежденисемпе предприятисенче те хĕрӳлĕн тытăнчĕç. Инструкторсем çитменнийĕ шута илсе, Осоавиахимăн Шупашкар хулинчи совечĕ 80 сехетлĕ курс организацилерĕ. Иртнĕ икĕ уйăх хушшинче çак курсран 80 çын сĕвренсе тухрĕ.

Анчах Осоавиахимăн хула комитечĕ çак çынсем тĕлĕшпе кайран çителĕклĕ ĕçлемен, вĕсене уйрăм организацисем çумне çирĕплетмен, вĕсем мĕнле ĕçленинине тĕрĕслесе пыман. Çакна пула курсран вĕренсе тухнă инструкторсенчен çурринех яхăнах хăйсем ĕçлекен учрежденисенче ПВХО ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе пĕр заняти те туса ирттермен, ПВХО нормине пĕр çын та паман. «Кожупряжь» артелĕнче те ĕç çавнашкалах япăх тăрать.

Осоавиахимăн хула комитечĕ ин. структорсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслемен-нине пула чылай учрежденисемпе предприятисенче ПВХО ĕçне вĕренес тĕлĕшпе занятисем туса ирттернипех чăрăнса тăнă. Занятисене активлă çурсене материалсене лайăх вĕренсе пынă граждансенчен халиччен те зачетсем йышăнман. Спирт заводĕнче 120 çын ытла ПВХО ĕçне программа тăрăх вĕренсе пĕтернĕ, анчах унти инструкторсем вĕсенчен паянчченех зачетсем йышăнман.

Хăшпĕр учрежденисенче ĕçлекенсем тата пĕчĕк ача пӳр хĕрарăмсем ПВХО кружокĕсен занятийĕсене вуçех çӳремен пулнă. Вăл хĕрарăмсем килте харпăрхăй тĕллĕн вĕренме сăмах панă. Анчах вĕсем мĕнле вĕреннине учреждени администрацийĕ те, унти инструкторсем те тĕрĕслесе пыман пулнă.

Хулари учрежденисемпе предприятисенче самозащита групписем организацилеленĕ, вĕсенче звеносене те йĕркелесе çитернĕ. Звено руководителĕсем валли Осоавиахим хула комитечĕ темиçе курс организациленĕ. Анчах çав курссенче вĕренекенсем дисциплинăна пăсни пулкалать. Çапах та учреждени, сен администрацийĕсемпе инструкторсем хăйсем уйăрнă звено руководителĕсем мĕнле вĕреннипе интереслеммеççĕ.

ССР Союзăн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени тăрăх ĕçсыннисен ПВХО кормисене пурин те декабрĕн 1-мĕшĕнчен памалла. Çавăнпа та пур учрежденисемпе предприятисенче те çак питех те паха ĕçе тимлĕн тытăнмалла, сывлăпран тапăннинчен сыхланма кашни ĕçсыннине вĕрентсе хатĕрлемелле.

К. А-в.

Вĕренӳ пунктĕнче

ÇĔМĔРЛЕ. **(«Чăваш Коммуни» корр.).** Пурне те çар ĕçне вĕрентме «Труженик» завод çумĕнче организациленĕ пункта тĕрлĕ учрежденисенчи бухгалтерсемпе экономистсем, мастерсемпе рабочисем вĕренĕве çӳреççĕ. Çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра кашниех вĕсем хăвăртрах çар ĕçне вĕренсе, тăшмана хирĕç кĕрешĕве тухма хатĕрленеççĕ.

Вĕренӳ пунктĕ темиçе взвода пĕрлештерсе тăрать. Вĕсенче командирсем пулса запасра тăракан старшинасем Тимофеев, Угодин тата запасра тăракан командирсем Ермишинпа Замбржицкий юлташсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене панса пынă ĕçе тивĕçлĕн пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хураççĕ.

Чăнах та, малтанхи кунсенче вĕренӳре хăшпĕр çитменлĕхсем пулнă. Каярахпа вĕсене пĕтернĕ. Халĕ занятисем йĕркеллĕ, çирĕп расписани тăрăх пулса иртеççĕ. Паянхи куна боецсем уйрăмăн тата отделение стройра утма, винтовкăн материальнăй чаçĕсене вĕренсе пĕтернĕ. Вĕренӳ пахалăхĕ ниĕ дисциплинипе те лайăх.

Сывлăпран химиллĕ майпа тапăннинчен сыхланма вĕренчĕç. Ку енĕпе командирсем ятарласа тунă макетсем пе усă курчĕç. Отравляющи веществосене вĕренĕ чухне боецсене вăл веществосене кăтартнă. Çакă вара уйрăмах программăри материалсене тĕплĕн вĕренме пулăшнă.

Çитес занятинче боецсем винтовкăран тӳрĕ тĕллесе пеме вĕренме тытăнаççĕ.

Çар ĕçне вĕренес тĕлĕшпе уйрăмăнах Ермишин юлташ командир пулса ĕçлекен взвод лайăх результатсем кăтартать. Кунта дисциплина çирĕп. Кашни заняти вăхăтра тата организованно пулса иртет.

—o—

Çитменлĕхсене пĕтермелле

ЭЛĔК. Мăн Вылăри вĕренӳ пунктĕнче И. Антипов тата И. Кириллов командирсем хăйсен обязанноçĕсене лайăх пĕлсе, тăрăшса вĕрентеççĕ. Вĕсем вĕрентнине боецсем лайăх ăнланаççĕ. Вĕренекенсем çар ĕçне пĕлсе çитме тăрăшаççĕ.

Анчах кунта çитменлĕхсем те пурха. Корнилов командир хăйĕн отделенинчи боецсене вĕрентнĕ чухне йăнăшсем тăвать. Сăмахран, отделени утса пынă чухне вăл «кругом!» командăна çапла парать: «кру-у» (малтанлăха хатĕрленме панă)—«гом!» (çавăрăнмалли команда), «марш!» (ку вара темĕн тумалли команда?). Отделени командирĕсен пĕлĕвĕсене ӳстерме тăрăшни сахал.

Октябрĕн 19-мĕшĕнче пунктра стена хаçатĕ тухрĕ. Унта та йăнăшсем чылай. Çар ĕçне вĕрентессинчи çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтермелле.

И. Е.

—o—

Тăрăшса вĕренеççĕ

КАНАШ. Асăва участокĕнче всевобучăн 110 сехетлĕ программине вĕренсе пĕтерчĕç. 20 кун хушши боецсем строй па утма, пăшалпа пеме, сывлăпран тапăннинчен сыхланма, маскировка тума, тактикăллă ыйтусене татса пама вĕреннĕ, Хĕрлĕ Çар уставĕсемпе паллашнă.

Вĕренӳ участокĕнче хурçă пек çирĕп çар дисциплини пулнă. Хăйсене дисциплинăллă тытăнăшăн 13 çынна строй умĕнче тав тунă.

Командирсем занятисене тĕплĕн хатĕрленсе ирттернĕ. Боецсем çар ĕçне пысăк интереспа вĕреннĕ.

Тăрăшса вĕрентни паха результатсем панă. Стройпа утма, пăшалпа пеме тата Хĕрлĕ Çар уставĕсене вĕренессипе пур отделенисем те лайăх паллă илнĕ. Григорьев юлташăн отделенийĕ малти вырăна йышăннă. Ку отделенири А. Чумаков, И. Никитин, Ф. Федоров комсомолецсем пĕтĕм программăна отлично вĕренсе пĕтернĕ.

Политикăллă ĕçе пĕр чăрăнмасăр туса пынă. Боецсем кашни кун политинформацисем итленĕ. Вĕреннĕ вăхăтра 3 номер стена хаçатĕ кăларнă, 3 пуху ирттернĕ, пĕр спектакль лартнă.

Ку пункт начальникĕ А. Семенов, политрук И. Григорьев юлташсем Хĕрлĕ Çар валли резерв хатĕрлес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя, пултарулăха хурса ĕçлеççĕ.

Т. ИВАНОВ.

Нимĕç самолечĕсем Мускав çине вĕçсе килни

Октябрĕн 28-мĕшĕнче тата октябрĕн 29-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсен темиçе группи Мускав çинне вĕçсе килнĕ. Тăшман самолечĕсен пысăк пайне зенитнăй батарейăсенчен персе тата пирĕн истребительсем сапаласа янă, вĕсене Мускав çине вĕçсе кĕме паман. Хула районĕ çине темиçе самолет вĕçсе кĕнĕ. Тăлăлли-паллисĕр пăрахнă фугасăй бомбăсем пурăнмалли çуртсем çине тата урама ӳкнĕ. Вăрçă ĕçĕпе кирлĕ об'ектсем сиенленмен. Жертвăсем пур.

ХАЛĂХА ПĔЛСЕ ТĂМА

Тăшман танкĕсене мĕнле пĕтермелле

Германи фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă историне пирĕн чаплă геройсем—танксен истребителĕсем хăйсен нумай тĕрлĕ паттăр ĕçĕсемпе палла пулса кĕрсе ĕлчĕç. Пирĕн сынсем паттăрăн та хăюллăн тăрса çапăçнине пула, тăшманăн çĕршер машинисем тата вĕсен экипажĕсем совет çĕрĕ çинче вилĕм тупрĕç. Тăшман пуринчен ытларах шанса тăнă танксем çĕрĕ çинче вилĕм тупрĕç. Тăшман пуринчен ытларах шанса тăнă танксем хăюллă совет патриочĕсемшĕн хăрушă пулмарĕç. Фашистла тискер-кайăксене çапса аркатассинчен нимĕнле броня та çăлса хăварма пултараймасть.

Фашистсем пур операцисенче те танксен чăсĕсене чи мала яраççĕ. Çак чăсем çине фашистсем хăйсен чи пысăк шанчăкĕсене хураççĕ. Çапăнпа та ĕнтĕ çĕмĕрсе тăкнă кашни танк фашистсене çĕмĕрсе тăкас вăхăта сывхартатать.

Вăрçă опычĕ кăтартса панă тăрăх, танксемпе бронемашинăсене хирĕç кашни боец, унăн аллинче пысăк хĕçпăшал — пулмасан та, çапăçма пултарать.

Боец Кулишев дозорта выртнă. Таçтан маштан, тăшман енчен, йывăç тĕмисене çĕмĕрсе танк килнĕ. Кулишев хăй пытаннă вырăнтан тухнă та мотор шавлакан тĕле упаленсе кайнă.

Танк сăрт çине тухнă, Кулишевран темиçе утăмра кăна пулнă. Хастарлă боец гранатăсен сыххине ваçкăнтарнă. Танк пĕр гусеница çинче çаврăнкаланă-çаврăнкаланă та чарăнса ларнă. Фашистсем орудирен те, пулеметсенчен те пенĕ. Вĕсене хирĕç никам та чĕнмен. Фашистсем пеме чарăннă.

Кулишев çав вăхăтра аттисене хывнă та пĕр шавламасăр танк çине хăпарнă. Вăрахах та тăман, люк уçăлнă та фашистла танкистăн пуçĕ курăнса кайнă. Кулишев ăна пĕтĕм вăйĕ çитнĕ таран кĕреçепе çапнă.

Çапла хăрушлăх умĕнче çухалса кайманни, чăтăмлă та тавçăрулăх пулни хăюллă боецца Кулишева фашистсен танкне хирĕç пĕччен тухса çапăçса çĕнтерме пулăшнă.

Кун пек примерсем сахал мар. Хĕрлĕ Çар боецĕсем, тăшман тылĕнче кĕрешекен партизанла отрядсенчи боецсем, тăшман танкĕсене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлекен отрядсен, фронт сывăхĕнчи вырăнсенче комсомол пуçарнипе организацисенскерсен, боецĕсем фашистсен танкĕсене хирĕç кĕрешмелли техникăна çĕнĕ меслетсем нумай кӳрсе пуянлатрĕç. Вĕсен опычĕ пире пысăк пулăшу пама пултарать, противникăн малалла шăтарса кĕрекен танкĕсене хирĕç сывăхран тăрса кĕрешмелли майсемпе лайăхрах усă курма вĕрентет.

Чи малтан **тăшман танкĕсене, тăшман машинисен типĕсене хăвăрт уйăрса палласа илме пĕлни кирлĕ.** Тулашĕнчен пăхсан вĕсен форми (силуэчĕ) мĕнле пулнине, вĕсен çӳремелли конструкцийĕ (ураписемпе гусеницисем) мĕнлине астуса тăмалла, вĕсем мĕнле хĕçпăшалланнине пĕлмелле. Çаксене пĕлни питех те кирлĕ, мĕншĕн тесен, тăшман танкĕсен чăтăмсăр тата сиен кӳме май пур вырăнĕсене пĕлсе тăрсан, вĕсене çăмăлрах та хăвăртрах пĕтерсе тăкма пулать.

Танксен истребителĕн çакна лайăх пĕлсе тăмалла: танкри пăхмалли хушăксем витĕр тата сăнаса пымалли приборсем витĕр, уйрăмах танк шуса пынă чухне, йĕри-таврари япаласене уçăлăн курса илме йывăр. Машина шуса пынă чухне сиктерĕ пирки танкист-стрелок тӳррĕнех тĕллесе пеме пултараймасть. Танкран 400 метртан кăна ăнăçлă пеме пулать.

Тата çакна та лайăх асăрхамалла. Путакан шурлăх урлă, чăтлăх та шултăра вăрман витĕр, шултăра тункатасем урлă, чăнкă çырма-çатрасемпе варсем урлă, пĕр метртан тарăнрах шыв урлă танк каçаймасть, çавăн пекех вăл 45 градусран чăнкăрах тăвайкинелле те хăпараймасть.

Танксене хăш тĕлтен ытларах сиен кӳме май пур-ха?

Кун пек вырăнсем вĕсем çакăсем пулаççĕ: гусеницисемпе кустăрмисем; пăхмалли хушăксемпе сăнаса пымалли приборсем; тĕпĕпе маччи; çăмăл тата пĕчĕк танксен аяккинчи бронисем те; командир ларса пыракан вырăнсем; моторпа бензин бакĕ вырнаçса тăракан вырăнсем (нимĕç танкĕсен чылайăшĕсен двигательсемпе бензин бакĕсем машинăн кайри пайĕнче вырнаçса тараççĕ).

Тăшман танкĕсен чăтăмсăр вырăнĕсене, ытларах сиен кӳме май пур вырăнĕсене пĕлсе тăрсан, противникăн авто-бронетанковăй часĕсене хирĕç, Хĕрлĕ Çарти тата истребительсен отрячĕсенчи паттăр боецсем кăна мар, пирĕн хăюллă партизансем те (пĕччеш-пĕрĕн пулса та, ушкăнпа та) ăнăçлăн кĕрешме пултараççĕ.

Танксене пĕтерес тĕлĕшпе кĕрешекенсен (истребительсен) яланах сыхăлăхлă та асăрхануллă, çивчĕ куçлă та чĕрĕ хăлхаллă пулмалла. Тăшман танкĕсем сывхарса килнине мĕнле те пулин маларах сиссе илни кирлĕ,—çакă вăл танксене пĕтерсе тăкмашкăн хăвăртрах хатĕрленсе тăма пулăшать. Кăнтăрла—куç çивчĕ пулмалла, çĕрле вара—хăлха çинче шанчăк. Ĕçлекен моторăн шавĕ çанталăк лăпкă чухне çĕрле пĕр километра çити илтĕнет, шăвакан танкăн шавĕ инçетерех те кайать.

Чăтăмлă та çирĕп пулни, танксем умĕнче çухалса кайманни—танк истребителĕсен тепĕр паха енĕ пулса тăрать. Тăшман танкĕсем килсе тухсан, таврари вырăна кура, хăвăрт та ăста маскировка туса ларма пĕлни кирлĕ. Кашни йывăç тĕми, кашни тĕмеске, кашни лакăм—витĕнсе ларма юрăхлă вырăнсем пулса тăраççĕ.

Пăшалсемпе пулеметсенчен пенĕ чухне танкăн пăхмалли хушăкĕсене, сăнаса пымалли приборсене тата танк хĕçпăшалне тĕллесе персен пуринчен те ăнăçлăрах пулать. Танк çине пеме вăл 100—300 метра çывхарсан тытăнмалла. Броньăна çĕмĕрекен пульăсемпе пенĕ чухне танксен аяккинчи бронисем вырăна, танкăн аяккинче маччине, çавăн пекех командир ларса сăнаса пыракан пĕчĕк башньăна тĕллесе персен авантарах пулать.

Тупăсенчен пенĕ чухне танкăн гусеницисене, машинăна чуптаракан тĕп кустăрмисене, аяккипе башнисене тĕллесе персен усăллăрах.

Противотанковăй гранатăсене пытанса ларнă вырăнтан пеме лайăхрах; гранатăна чи малтан гусеницăсем çине, тĕп кустăрмасем çине, мотор пайĕн маччине башня маччи çине тата ытти çухлерех вырăнсем çине пемелле.

4—5 гранатăран тăракан çыхха, танка 25—30 метр таран çывăха ярса, пытанса ларнă вырăнтан гусеницăсем айне е танк çине ывăтмалла.

Вут хыптаракан шĕвек тултарнă бутылкăсем—тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте чи майлă та шанчăклă япаласем пулса тăраççĕ. Çунакан шĕвек тултарнă виçĕ бутылка илсе (май килсен, пĕрине, хăй тĕллĕн çуламланса каякан «КС» ятлă шĕвек тултарнăскерне, тепĕр иккĕшне—1-мĕшне 3-мĕш номерлĕ хутăш шĕвексем тултарнăскерсене илмелле), çав бутылкăсене илсе охсна, щеле, снаряд çурăлнипе пулнă лакăма, хӳме хыçне, авăра, канава е ытти çавăн пек пулеметсемпе пăшалтран пенинчен тата снаряд ванчăкĕсенчен сыхланса юлма май пур çĕре вырнаçса лармалла. Танк курăнса кайсан бутылкăсене ывăтма хатĕрленсе хумалла. Тăшмана 15—20 метр таран сывăха ямалла та «КС» тултарнă бутылкăна варринчен тытса, танкăн моторнăй отделенине, пăхмалли хушăкĕсене, е танкăн тачăнах хупăнман люкĕсене тĕллесе, сулăмлăн ывăтмалла. Кун хыççăн, 1-мĕш е 3-мĕш номерлĕ шĕвексем тултарнă бутылкăсене пĕрлешĕне илсе, шĕвексеневут тивертсе, вăйлăн ывăтмалла. Ку бутылкăсене майĕсенчен е хăвна мĕнле майлăрах, çав тĕлтен тытса ывăтма пулать.

Паллах, çаксем вĕсем тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешес ĕçри пĕтĕмĕшле кăтартусем пулса тăраççĕ. Кашни уйрăм вырăнта, хăйне кура, ытти нумай тĕрлĕ майсемпе те усă курма пулать. Ăста мĕнле май килет, çавăн пек кĕрешмелле, тавçăрулăх пулмалла. Кулишев боецăн примерĕ кăтартса панă пек, çав ĕçре кĕреçе те кирлĕ пулма пултарать. Танк умĕнче çухалса кайма, шикленсе ӳкме кирлĕ мар. Çухалса кайман боецăн танк хăрушă мар.

Хăюлăх, çирĕплĕхпе тавçăрулăх совет çыннисен пысăк тивĕçлĕхĕ пулса тăрать. Фашистла ирĕсĕрсене мĕнле пырăнта мĕнле майпа çапса аркатма май пур, çавăн пек çапса аркатмалла, пĕтерсе пымалла.

Майор И. ШТРОМ.

Лайăх ĕçшĕн хушса тӳлеççĕ

ШАХАСАН. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозра пур бригадăсем те хăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. 7-мĕш бригадăн уйрăмăнах кĕрхи тулă ăнса пулнă. Бригада хăйĕн умне кашни гектартан 13,9 центнер кĕрхи тулă туса илес задача лартнă пулнă. Çав ĕçе пурнăçлама колхозниксем уйхирти ĕçсене пурне те вăхăтра тата йĕркеллĕ туса пынă. Çапла ĕçлесе вĕсем кашни гектартан 19,48 центнер кĕрхи тулă туса илнĕ. Лайăх ĕçлесе тырпул тухăçлăхне ӳстернĕшĕн вĕсене, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени тăрăх, 44,77 центнер тулă хушса панă.

Колхозăн çурхи тулă та питĕ лайăх пулчĕ. Виççĕмĕш бригадăри колхозниксем кашни гектартан 13,5 центнер çурхи тулă туса илме палăртнă пулсан, гектар пуçне 20,60 центнер туса илнĕ. Ку бригадăри колхозниксене 78,28 центнер тулă хушса панă. Иккĕмĕш бригадăри колхозниксем халиччен пулман пысăк тухăçлă урпа туса илнĕ. Вĕсем мĕнпурĕ 10 гектар урпа акса, кашни гектар пуçне 35,33 центнер урпа туса илнĕ. Çапла вара колхозниксем хăйсен лайăх ĕçĕшĕн 86,66 центнер урпа хушса илеççĕ.

Халĕ колхозниксем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çиччĕмĕш бригадири К. Сергеева кăçал колхоз производствинче 127 кун ĕçлесе 167 ĕçкунĕ тунă. Иккĕмĕш бригадири 60 çулхи колхозник-стахановец Тимофей Кондратьев та пĕр ĕçрен те юлмасть. Вăл колхоз производствинче 167 кун ĕçлесе 184,18 ĕçкунĕ тунă. Уйхир ĕçĕнче ĕçлесех 119 ĕçкунĕ тунă. Виççĕмĕш тата ытти бригадăсенче те уйхир ĕçĕнче хастарлă ĕçленĕ колхозниксем нумай. Виççĕмĕш бригадири А. Романова юлташ уйхир ĕçĕнчех 128 ĕçкунĕ тунă.

Октябрĕн 21-мĕш тĕлне колхозри хăшпĕр бригадăсем çуртыррисене çапса пĕтерчĕç. Çĕрулми тата ытти пахчаçимĕççене те пĕтĕмĕшпех пуçтарса кĕчĕç.

С. ШАДИН.

Тракторсене юсаççĕ

Ишлейри машинно-тракторнăй станцинчи трактористсем кĕрхи çĕртме сухалас плана тултарма тăрăшаççĕ. Çав вăхăтрах тракторсене тата ытти машинăсене юсас ĕçсене те йĕркеллĕ туса пыраççĕ. Нумаях пулмасть, пĕр канмалли кун трактористсемпе механиксем 40 çын пухăнса ялхуçалăх машинисене юсамалли цеха тасатса йĕркене кĕртрĕç, оборудованисене юсаса вырнаçтарса лартрĕç. Халĕ тракторсене тата ытти машинăсене юсама тытăннă. Иртнĕ çулта тракторсене юсанă çĕрте кирлĕ пулнă пайсене вырăнтах нумай туса кăларнăччĕ. Кăçал, вăрçă вăхăтĕнчи условисене шута илсе, шалти ресурссемпе татах та анлăн усă кураççĕ. Халĕ тракторсене юсама кирлĕ пайсене вырăнтах тума вĕренсе пыраççĕ, мастерскойра выртса çӳрекен тимĕр-тăмăр та усăллă.

Тракторсене юсанă çĕрте хĕрарăм-трактористкăсем ытларах ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ кăçал арçынсем Хĕрлĕ Çара кайнă хыççăн ĕçе тытăннă. Вĕсен хушшинче производствăллă активлăх кунран кунах ӳссе пырать. Уйрăмăнах 9-мĕш бригадири Т. Белова, 3-мĕш бригадири И. Носова тата К. Сапожникова юлташсем тракторсене юсас ĕçе хăвăртлатма пĕтĕм вăя хурса тăрăшаççĕ. 9-мĕш бригада 2 трактор юсаса кăларнă ĕнтĕ. Трактористкăсем Октябрь уявĕччен 20 трактор юсаса кăларассишĕн тăрăшаççĕ. Тракторсене юсанă вăхăтрах плугсене те, сеялкăсене те юсаççĕ.

Ишлейри машинно-тракторнăй станцин хĕллехи вăхăтра 55 тракторист, 10 комбайнер вĕрентсе кăлармалла. Инсеплĕ кадрсен ретне тăрăшăн тăрăшакансем колхозницăсем хушшинче ытларах. Халĕ 30 хĕрача трактористсен курсне вĕренме илме ыйтса заявлени панă.

С. ГОРЛАНОВ.

Выльăхсене тутă тата ăшă витесенче хĕл каçарма хатĕрленеççĕ

КУКЕС. Районри колхозсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса пур ĕçе те вăхăтра туса пырассишĕн тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕç. Нумай колхозсем выльăхсене хĕл каçарма пур енчен те çитĕлĕклĕ хатĕрленсе çитрĕç. Соляново ялсоветĕнчи «Правда» колхоз хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе чылай çитĕнӳсем турĕ. Вăл ĕнесем валли çĕнĕ вите туса лартрĕ. Кивĕ витесене пурне те юсанă. Халĕ фермăри выльăхсем валли витесем çитĕлĕклĕ. Выльăх апачĕсене те кирлĕ таранах пур. Хĕл вăхăтĕнче çитерме 1.705 центнер утă-улăм хатĕрленĕ, 25 тонна силос хывса хăварнă. Выльăх апачĕсене ферма заведующийĕн аллине актпа çирĕплетсе панă.

Заводской ялсоветĕнчи «Осоавиахим» колхоз та выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе чылай çитĕнӳсем тунă. Фермăри выльăхсем валли çитĕлĕклĕ утă-улăм хатĕрленĕ. 30 тонна силос хывса плана ытлашшипех тултарнă, витесене юсаса ăшăтнă, 100 чăх валли çĕнĕ вите тунă.

Çавнашкалах Шемшер ялсоветне кĕрекен «Серп и молот», «Красный флот» колхозсем те хĕле лайăх хатĕрленнĕ.

Хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе начар ĕçлекен колхозсем те пур-ха. Альгеш ялсоветĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз силос хывса хăварнисĕр пуçне нимĕн те туман. Сыснасем валли вите çук, ытти выльăхсен витисене те юсаман. Ферма заведующийĕ хĕл сывхарнине туймасть пулмалла.

Хурăнлăхри «Туçи» колхозра та хĕле хатĕрленес ĕçе çитĕлĕклĕ туса пымаççĕ. Сурăх тата чăх-чĕп витисем çук, ытти витесене çумăр çусан шывланать. Çак çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Выльăх-чĕрлĕхсене тутă, ăшă витесенче хĕл каçарма тăрăшмалла.

И. ВАСИЛЬЕВ.

Аван çапса пĕтерчĕç

ВĂРНАР. Аслă уява колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленипе кĕтсе илеççĕ. Тĕмпекри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз уборкăна кăçал нихăçанхинчен пысăк пахалăхпа иртертчĕ. Çак кунсенчех вăл аван çапса, çĕрулми кăларса пĕтерчĕ. Аван çапнă çĕрте ĕçе сменăсем тăрăх туса пычĕç, колхозниксем пĕтĕм талăкĕпех татти сыпписĕр ĕçлерĕç. Ватă колхозник П. Иванов юлташ, тырă турттарнă çĕрте икшер смена ĕçлесе, нормăна 200-шер процент тултарса пычĕ. Е. Романов, Г. Филиппов, М. Ефимова юлташсем те аван çапнă çĕрте икшер норма тултарса пычĕç.

В. МАКСИМОВ.

Халăх юрри-сăввисем

Хĕр такмакĕсенчен

Тантăш хĕрсем, суйлар-и
Пиççе çитнĕ сырлине.
Ай, каччине савар-и
Хĕрлĕ ордена илнине.

Юхнă-юхман шывпала
Эпĕ кĕпе çумастăп.
Чăх чĕреллĕ ачапа
Ларса сăмах хушмастăп.

Пули-пулми çеçкене
Кăкăр умне ан лартăр.
Пули-пулми çынсене
Хăвăр çумма ан лартăр.

Ман шур тутăр пĕчĕккĕ,
Пĕчĕккĕ те çеçкеллĕ.
Манăн савни пĕчĕккĕ,
Пĕчĕккĕ те орденлĕ.

Хĕрлĕ чие пахчине
Хăçан кĕрсе тухам-ши?
Хĕрлĕ Çăран каччине
Хăçан курса савам-ши?

Манăн савни артиллерист,
Кăтра çӳçлĕ яш ача.
Фашистсене çĕнтерессĕн
Тухăп ăна эп качча.

Чечек пултăр, сарă пултăр,
Сар хĕвелте сарăлтăр.
Каччи пултăр, матур пултăр —
Тăшман хурри ан пултăр.

Ăнса пулман пусисем
Кантăр айне кĕреççĕ.
Ополченец маррисем
Хĕр куçĕнчен ӳкеççĕ.

Вуник куккук, пĕр карăш
Авăтаççĕ пĕр харăс.
Ай-хай, хамăр тантăшсем
Вăрçа каяç пĕр харăс.

Шурă тутăр яралă
Халь те арча тĕпĕнче.
Сталин атте сăмахĕсем
Ĕмĕр чĕрем варринче.

Çулла илнĕ çут пушмак
Çут сукмака юратать.
Колхоз хĕрĕ çавнашкал
Ирĕклĕхе юратать.

И куршанак, куршанак,
Татăр-пăрахăр курсанах.
Урнă кашкăр фашистне
Çапар пăрахар тытсанах.

Пралук картăм вăрмана
Чĕкеç ларса юрлама.
Тантăш патне кĕрĕк ятăм
Сив вăхăтра тăхăнма.

Шăнкăр-шанкăр шăнкăравĕ —
Урхамахăн майĕнче.
Сар хĕр сыхнă мамăк шарăх
Матур танкист маййĕнче.

Сар кайăкка юратса
Патăм йăва çавăрса.
Сар танкиста юратса
Патăм çăм алса сыхса.

Пирĕн умра çаранлăх
Çаранлăхра — çырлалăх.
Çырла татар, кукăль тăвар,
Летчиксене хăналар.

Пурçăн тутăр çӳçине
Якатман кун иртмерĕ.
Хĕрлĕ Çарти савăнине
Асăнман кун иртмерĕ.

Садри сарă кайăксен
Мамăк иккен тĕссем,
Кĕмĕл иккен юррисем,
Хĕрлĕ Çăран хĕрсен
Мамăк иккен аллисем,
Шерпет иккен чĕлхисем.

Çӳл ту çинчен чул кустартăм
Чăлт-чăлт юхан шыв çине;
Чĕрем çине ал пустартăм
Хĕрлĕ Çăран ачине,
Хĕрлĕ Çăран ачине,
Ылтăн орден илнине.

Халăх такмакĕсем тăрăх Гр. КРАСНОВ çырнă.

ДЕЙСТВУЮЩИ ÇУРÇĔР ФЛОЧĔ. Химически тревога сигналĕ тăрăх. Е. ХАЛДЕЙ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Чыса тивĕçлĕ механик

Шупашкартри электростанцинчи главнăй механик Александр Васильевич Филиппов юлташ хăйĕн çур ĕмĕрне водосветра ĕçлесе иртернĕ. Малтанах вăл масленщик-смазчик, унтан машинист помощникĕ пулнă. Вăл 1933 çултан пуçласа 1935 çула çитичченех Хĕрлĕ Çарта, Амур шывĕ тăрăх çӳрекен катер çинче моторист пулнă. Унтан таврăнсан каллех водосветра хăйĕн малтанхи вырăнĕнче ĕçлеме тытăннă.

— Электростанци вăл вăхăтра начар ĕçлетчĕ, пĕрмай аварисем пулатчĕç. 1937 çулта 78 хут авари пулчĕ. Вăл аварисем пурнĕçлан ытларах поршень головки çинчи шпилькăсем татăлса кайнипе пулатчĕç. Паллах, ăна юсаса лартма çăмăл мар. Кашни авари вăл вăхăтра сахалтан та 8—12 сехет ытлашши ĕç тăватчĕ. Ун чухне вăл аварисĕн сăлтавнĕ тупассишĕн никам та тăрăшман. Механиксем, дизельсене тепĕр хут ĕçлеттерме май çук тесе, ĕçлеме пăрахатчĕç. Çапла вара çав аварисем пайтах ытлашши укçа-тенке пĕтеретчĕç, — тет Филиппов юлташ.

Машинăсемпе çавнашкал авари пулнă Филиппов юлташа каяç паман. Шпилькăсем хуçăлнисĕр пуçне машинăсен юсавлă марри нимĕн те пулман. Пĕрре вăл шпилькăсем хуçăласси çинчен ямалла тăвасси çинчен главнăй механике хăйĕн шухăшне каласа панă. Анчах механик Филиппов юлташ калани нине хакламан, унпа интереслеммен.

1939 çулта Филиппов юлташ главнăй механик пулса тăнă хыççăн хăйĕн тахçанхи шухăшне пурнăçласа пăхма тытăннă. Вăл двигатель патне пыракан шыва улшăнса тăмалла тунă. Вĕри поршень çинчи головка çине сивĕ шыв сасартăк пырса кĕнипе шпилькăсем татăлса каясси пачах чакнă. Филиппов юлташ куншах лăпланса ларман. Вăл поршень çинчи головкăсене патрубок лартса улăштарма шут тытнă. Çапла тусан, дизель хĕллехи сивĕ кунсенче те пĕр пек ĕçлемелле. Çак ĕçе вăл 1941 çулта пурнăçлать. Халĕ водосветра шпилькăсем татăлса кайнă пирки пĕр авари те пулмасть.

Вăрçă обстановки мĕнпур предприятисене йĕркеллĕн ĕçлеттерме хушать. Ку чи малтанах водосвет мĕнле ĕçлесе тăнинчен килет. Шупашкарти пĕтĕм предприятисене кучухнехи вăрçă условинне тивĕçтерсе ĕçлеттерес енĕпе Филиппов юлташ пайтах вăй хунă. Вăл сывăрмасăр ĕçленĕ.

— Сехет механизмĕ пек тĕрĕс ĕçлемелле. Халь вăхăта сехетпе виçмелли тапхăр мар. Тепĕр чухне эпĕ виç-тăватă кун килте пулаймастăп,—тет вăл.

Нумаях пулмасть çакăн пек ĕç пулса иртнĕ: машиннăй залри дизельнăй цехăн змеевикĕсем татăлса кайнă. Ăна хăвăрт улăштарса лартмалла. Унсăрăн пĕтĕм цех ĕçлеме чарăнса ларса, предприятисенче простой пулать. Сĕм çĕрле Филиппов юлташа цеха чĕнсе пыраççĕ. Унпа пĕрлех машинист помощникĕ Бедняков, слесарьсем Каталышевпа Морозов юлташсем те хăйсен вырăнне çитсе тăраççĕ. Вĕсем икĕ кун хушши килĕсене тавăнмасăр, кунĕнçĕрĕн цехра ĕçлесе, прорыв пулассине пĕтерсе лартнă. Ирхине рабочисем ĕçлеме тухиччен 4 сехет малтан машиннăй залра пурте йĕркеллĕ тăнă. Водосветри главнăй механик Филиппов юлташ ĕçĕ çинчен рабочисем çапла каласа параççĕ:

— Çывăрма пĕлмест вăл. Ăçта кăшт юсавлă мар, Александр Васильевич унта. Тепĕр чухне килне кайма та макăсах каять.

Кăçал июнь уйăхĕнче Кисловодска канма кайрĕ. Анчах Германи фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине вăрăхурахла тапăнса кĕнĕ хыпара илтсен, çав кунах курортран тухса килчĕ. Вăл производствăна темрен те хăвала хурать. Хăйĕн ĕçне вăл, сывлăхне шеллемесĕр, чĕререн юратса ĕçлет,—теççĕ рабочисем.

Смазчикрен главнăй механик пулса тăнă патриотша рабочисем тивĕçлипех мухтанаççĕ. Унăн ĕçне правительство пысăк хак панă.

Вăрçă вăхăтĕнче производствăра ĕçлесе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти октябрĕн 8-мĕшĕнче кăларнă Указпа Александр Васильевич Филиппов юлташа хисеплĕ грамота парса наградăланă.

Н. ЮМАНГАЙ.

217 пин тенкĕ пособи панă

ÇĔРПУ. Урнă тăшмана хирĕç хăйсен пурнăçĕсене шеллемесĕр çапăçакан паттăр красноармеецсен çемьисем кашни уйăхрах пособи илсе тăраççĕ. Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа фронта кайнă красноармеецсен çемьисене 217 пин тенкĕ пособи, 2.500 кубометр вутă панă. Унсăр пуçне колхоссенчи пулăшу кассисем 275 çемьене 40.752 килограмм тĕштырă парса пулăшнă.

Фронта кайнă красноармеецсен арăмĕсене (пĕчĕк ача суккисене) предприятисемпе учрежденисене тата колхозсенчи ответлă вырăнсене вырнаçтарнă. Колхозсенче красноармеецсен арăмĕсем бригадирсем, ферма заведующийĕсем, кладовщиксем, дояркăсем пулса ĕçлеççĕ. Предприятисемпе учрежденисенче 28 хĕрарăм ĕçлет.

Чылай красноармеецсен арăмĕсем упăшкисем вырăнне ĕçлеме юлчĕç. Акă, Пострикассинчи «Прожектор» колхоз членĕ Яшкина юлташ упăшки вырăнĕнче Абакассинчи Громов ячĕпе тăракан кустпромартельре культработник пулса ĕçлет.

Г. ПЕТРОВ. З. ЕГОРОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ ÇУРÇĔР ФЛОЧĔ. Химически тревога сигналĕ тăрăх. Е. ХАЛДЕЙ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Вулав çурчĕсенче

Юлашки вăхăтра Çĕрпӳ районĕнчи чылай вулав çурчĕсен ĕçĕ вăйланчĕ. Сăмахран, Çырмапуç ялсоветĕнчи вулав çурчĕ тăтăшах лекцисем, калаçусем туса иртерет, купăта каçсерен колхозниксем шухăнса радио тăрăх паракан юлашки хыпарсене итлеççĕ. Агитаци ĕçĕнче учитель-агитатор Алексеев юлташ хăйне уйрăмах палăртрĕ.

Вулав çурчĕн заведующийĕ Кузьмин тăрăшса ĕçленипе ПВХО кружокĕ организацилене, унта халĕ 173 çын вĕренет. Вулав çурчĕ хăй тавра ялти актива явăçтарнă. Агитаторсем ĕççыннисем хушшинчи массăлла-политикăллă ĕçе партипе правительство заданийĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртессипе, колхозăн производство ĕçĕпе таччăн çыхăнтарса пыраççĕ. Агитаторсен пуçарăвĕпе ялти ĕççыннисем фронта, Хĕрлĕ Çар боецĕсене пулăшас ĕçе те тимлĕн туса пыраççĕ. Колхозниксем хушшинче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пĕтĕмпе 7,5 килограмм çăм, 17 тир, 10 алшăлли, 8 мăшăр чăлха, 5 мăшăр тăла, 8 çĕлĕк, 7 мăшăр алшиш пухса районри комиссине леçсе панă.

Çавăн пекех, Первомайски ялсоветĕнчи вулав çурчĕ те хăйĕн ĕçне ăнăçлăн туса пырать. Кунта час-часах ушкăнпа пухăнса çĕнĕ хаçатсем вулаççĕ, радио тăрăх юлашки хыпарсем итлеççĕ. Агитаторсем туса иртерекен калаçусене, лекцисемпе докладсене кашнинчех 120—130-шар çын пухăнать.

Колхозниксемпе колхозницăсене хальхи вăхăтри лару-тăру çинчен ăнлантарса пани производствăри дисциплинăна çĕклеме, колхозниксем умĕнче тăракан хуçалăхпа политикăллă задачăсене пурнăçа кĕртме пулăшса пырать. Колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хавхалансах пухаççĕ. Çак колхозра пĕтĕмпе 48 килограмм çăм, 36 тир, 9 мăшăр алшиш, 5 мăшăр чăлха, 31 метр пир, 14 çĕлĕк пухнă.

Анчах та районри вулав çурчĕсем пурте мар-ха хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пыраççĕ. Уйрăм вулав çурчĕсем—Юлашри (заведующийĕ Павлов юлташ), Туçири (Федорова), Анаткас-Кипекçери (Ильин юлташ), Лĕпсерти (Иванова юлташ) вулав çурчĕсем мирлĕ вăхăтри пекех ĕçлесе пыраççĕ. Çак асăннă вулав çурчĕсем малта пыраканнисен ĕçĕсемпе тĕплĕн паллашмалла, хăйсен ĕçĕсене малта пыраканнисем пек урăхлатса çĕнетмелле.

П. ИВАНОВ.

Чугунçул çинчи комсомолецсем

Вăрçă кунĕсенче чугунçул çинчи комсомолецсем нормăна икшер-виçшер хут тултарса пĕр вăхăтрах темиçе профессипе ĕçлеме тытăнчĕç.

Улатăр деповĕнчи комсомолецсем хăйсен паровозĕсене хăйсемех хĕллене хатĕрлесе çитерес ĕçе пуçарса янă. Ку пуçарăва ытти паровозниксем те кăлăççĕ.

Депори комсомолецсем производствăра малта пыраççĕ. Ягина, Легостина комсомолецсем, канцеляринче ĕçленĕскерсем, вăрçă кунĕсенче токарь специальноçне вĕренчĕç. Халĕ вĕсем токарь пулса ĕçлеççĕ. Ягин комсомолец 4 специальноçпа ĕçлеме пултарнине практикăра кăтартрĕ. Çитменнине кашни специальноçĕпех сменăри нормăна икçĕр процентран кая мар тултарать.

Малянов комсомолец цехра агитатор пулса ĕçлет. Вăл агитациллĕ-массăллă ĕçе производствăллă ыйтусемпе сыхăнтарса пырать. Хăй яланах нормăна 200—280 процент тултарса ĕçлет. Тепĕр чухне 2—3 смена хушши цехран пĕр тухмасăр ĕçлет. Нумай пулмасть вăл хăй тĕллĕн машинист помощникĕ пулма вĕренчĕ.

Янкăлчă станцинчи комсомолецсем те начар мар ĕçлеççĕ. Вĕсене станци начальникĕ Дмитриев комсомолец лайăх ертсе пырать. Вĕсем чугунçул çинче ĕçлекен рабочисем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе аван йĕркеленĕ. Çавăнпа ĕçре брак та, прездсене ытлашши чарса тăнисем те пулмаççĕ.

Янкăлчă станци хĕллене те лайăх хатĕрленсе çитнĕ.

Чугунçулăн Улатăр отделенинчи комсомолецсем хĕрачасене арçынсен специальноçне вĕрентес ĕçе йĕркеленĕ. 20 хĕрача станци дежурнăйĕсем, стрелочниксем, токарьсем, слесарьсем пулма вĕренеççĕ.

Примерлă ĕçлекен комсомолецсен йышĕ нумай. Анчах хăшпĕр чухне комсомолецсем те брак тавăççĕ.

Комсомолецсемпе çамрăк рабочисем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе çителĕкĕр йĕркеленĕ-ха. Çавăнпа ĕнтĕ комсомол йышĕ те начар ӳсет. Кăçал мĕнпурĕ те 33 çамрăка çеç комсомол ретне илнĕ.

Малашне чугунçул çинчи комсомолецсен производствăра тата лайăхрах тăрăшса ĕçлемелле, çамрăксен хушшинче ĕçлессине вăйлатмалла, вĕсене ытларах комсомол ретне явăçтарма тăрăшмалла.

ВИЛЬДЯЕВ.

Улатăрти отделенин политотдел начальникĕн заместителĕ.

Оборона фондне тырă параççĕ

ИШЛЕЙ. Вăрман-Сӳктер ялсоветне кĕрекен «Майăн 1-мĕш» колхоз çĕршыв обороннă фондне 10 центнер, В. И. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 7 центнер тырă панăç.

Е. ТЮРИН.

АГРОНОМ КАНАШĔСЕМ

ВĂРЛĂХА МĔНЛЕ УСРАМАЛЛА

Ăнса пулнă тырпула уйхиртен пухса кĕртнĕ хыççăн кашни колхоз, кашни хуçалăх умне тепĕр пысăк та ответлă задача тухса тăрать, вăл—пухса кĕртнĕ тырпула пăсăласран лайăх упраса усрасси. Ку задачăна асра тытни питĕ кирлĕ, питĕ усăллă, мĕншĕн тесен тырпула пăсакан сăлтавсем сахал мар: тырпул таса марри, вăл ытлашши нӳрĕкли, усрама кирлĕ пек лайăх выраннă çукки, тырпул пахалăхне вăхăтра сăнаса пыманни тата ытти сем те.

Тасалăх—тырпула лайăх упраса усрамалли условисенчен пĕри пулса тăрать. Тырпул тусанлă, тăпралă, çӳпçаплă пулсан, ун пек тырпулăн пахалăхĕ начарринех такам та чухлать, мĕншĕн тесен ун пек тырпул часах нӳрелсе пăсăлма пултарать. Унăн пахалăхĕ чакни авăртнă çĕрте те, çăкăр пĕçернĕ чухне те, пĕçернĕ çăкăра çинĕ чухне те палăрать (чуста лайăх тытăнса хăпармасть, лайăх пиçмест, пиçнĕ çăкăр лайăх тутăллă пулмасть т. ыт. те). Тасамарлăх, сиенлĕ сумкурăк вăррисем нумай пулни пуринчен ытла вăрлăхлăх тырпула пăсать. Ун пек вăрлăх чипер усранă çĕртех чĕрлсе вĕриленме, пăсăлма тытăнать, унăн шăтас пултарулăхĕ чакма пуçлать. Тырпула итем çинче чухнех лайăхрах тасатас пулать. Пысăк машинăпа е комбайнпа вырса çаннă тырра тепĕр хут сăвăркан сортировка витĕр ярса тасатас пулать. Ахаль машинăпа е ахаль çаннă тырра та малтан сăвăрса унтан сортировкăпа тасатас пулать.

Типĕтесси. Таса пулнисĕр пуçне, упраса усракан тырă кирлĕ таран типĕ пулмалла, мĕншĕн тесен нӳрĕ тырă вĕриленсе пăсăлма тытăнать. Тырпул нӳрлĕхĕ 15 процентран иртсен, ăна вара усрама та хĕн пулать: типĕтсе нӳрĕклĕхне чакармасан, вăл малалла пысăк хăвăртлăхпа вĕриленсе пăсăлса пырать, вара ун пек тырпул таврашĕнче сăвăс пек сиенлекенсем те хăвăртрах ĕрчеме пуçлаççĕ.

Кăçал, кĕр йĕпе килнĕ пирки, нӳрĕ тырпул нумай, çавăнпа ку тĕлĕшпе кашни хуçалăхăн хăйĕн тырпулне пысăк тимлĕхпе упрани кирлĕ. Ку тĕлĕшпе тырпул мĕнле упранса тăнине пĕлме пураран е михĕсенчен кашни пилĕк кунтах пробăсем илсе лабораторисенче сăнаса пăхас пулать. Тырпулăн нӳрĕклĕхĕ 15 процентран иртет пулсан, вара тырра мĕнле те пулсан типĕтме тăрăшас пулать: хĕвелпе, типĕ сывлăшпа, пăтратса, сушилкăпа типĕтес пулать т. ыт. те. Çанталăк уяр тăрать пулсан, тулти сывлăш типĕ пулсан, складсен алăкĕсене уçса, складсем витĕр типĕ сывлăша çӳретесе, çав вăхăтрах пурасенче выртакан тырра тăтăшах (5—6 хутчен) пăтратса аван типĕтме пулать Тырпула сăвăс ернĕ пулсан, тырпула складран кăларса алăсемпе алани кирлĕ, капла туни тырран нӳрĕклĕхне те чакарать.

Анчах кун пек ĕçе йĕпе-сапа çанталăкра тума юрамасть. Кĕркунне складсенче, амбарсенче сывлăш тултинчен ăшăрах та типĕрех тăрать. Складсен, амбарсен алăкĕсене йĕпе çанталăкра уçса пăрахсан, складсенчи сывлăш та нӳрелет, унтан вăл нӳрĕке унти вăрлăх та туртса илет те чĕрĕлме, вĕриленме, пăсăлма пултарать. Çапла майпа хальхи вăхăтра хăшпĕр складсенчи вăрлăхăн нӳрĕкĕ икĕ процент ытларах та хăпарни палăрнă. Çакă вăл склад работникĕсем ответлăха туймасăр ĕçленине кăтартать, вăл складсен алăкĕсене йĕпе çанталăкра складсен алăкĕсене ялан хупă тăратма хушас пулать, склад ăшчикĕсене нӳретме пултаракан япаласенчен: çӳçапран, тусан-пылчăкран таса усрас пулать, складсенче ĕçлемелле пулсан, алăксене тачă хупса çӳресе ĕçлес пулать. Кунпа пĕрлех складсенчи ытлашши шăтăк-çурăксене те питĕрсе усранă кирлĕ. Çапла ĕçлесен çеç складсене тулти нӳрĕк сывлăш кĕрессрен, вăрлăх чĕрĕлсе пăсăласран хăтăлма пулать.

Хĕвелпе е типĕ сывлăшпа типĕтме май килмесен, вăрлăха авăнра, сушилкăсенче, е ăшă çуртра 5—8 сантиметр хуланăш сарса типĕтме пулать. Ун пек çĕрте ăшă пĕр пек, Цельсипе 40—45 градус тăратас пулать. Тыррине вара тăтăшах пăтратса тăрас пулать (пĕр сехет хушшинче пĕрререн кая мар тĕппипех пăтратмалла)

Кунта çакна асăрхани кирлĕ: вăрлăх мĕн чухлĕ нӳрĕкрех, ăна типĕтекен ăшă çавăн чухлĕ кайрах пулмалла. Ăшă 40—45 градус (Цельсипе) пулнине вăрлăхăн шăтас пултарулăхĕ чакмасть, анчах вентиляци начар пулсан, ăшă 40 градус çеç пулсан та, вăрлăх пылланнипе унăн шăтас пултарулăхĕ чакма пултарать.

Типĕтнĕ тырра, ăна кирек те мĕнле меслетпе типĕтнĕ пулсан та, сортировка витĕр тепĕр хут сăвăрса кăларас пулать.

Вăрлăха усрасси складсенче, амбарсенче, клетсенче пулса пырать. Кирек ăçта усрамалла пулсан та, кунта чи малтанах пĕр-пĕр сортлă вăрлăх тепринпе хутăшса каймалла ан пултăр тесе тăрăшни кирлĕ. Сăмахран, хуçалăхăн кĕрхи тулă икĕ сорт (калăпăр, Ржано-пшеничнăй гибрид тата «Лютесценс 0329») пулсан, вĕсене е уйрăм складсенче, е пĕр складрах уйрăм пулĕмсенче усрас пулать. Çавăн пекех, пĕр сорт вăрлăхах, тасалăх енчен пĕр пек пулмасан, пĕр пек тасалăхлине пĕр пулĕмре, тепĕр ыйшши тасалăхлине тепĕр пулĕме хывса усрас пулать.

Хăшпĕр вăрлăхсем, сăмахран, ыраш—кĕрхи тулăпа, тулă—урпăпа, урпа—сĕлĕпе хутăшса кайсан, вĕсене пĕр-пĕринчен ниепле те уйăрма çук. Çавăнпа ун пек вăрлăхсене юнашар пулĕмсене хывма юрамасть.

Вăрлăха михĕсенче те, пулĕмсене хывса та усрама пулать. Михĕсенче пахарах сортлă вăрлăха усраççĕ. Анчах кун пек чух михĕсем çĕтĕлсе пăсăласран сыхланни кирлĕ. Михĕсене склада мĕнле кирлĕ апла пăрахса тултарма юрамасть, икĕ михĕне хире-хирĕç, сыхнисене шалалла туса, йĕркеллĕ хурса купаласа штабельсем тумалла. Тырăн нӳрлĕхне пăхса, штабельсен çулĕшĕнче михĕсен йĕрки тăваттăран саккăра çити пулма пултарать. Михĕсем хушшинче сывлăш улшăнса тăма, штабеле тулли михĕсене 3—4 йĕрке хурсан, варне типĕ хăма е яка шăвăсем хумалла. Складăн урайĕ чул пулсан, урайне те хулăмрах хăмасем хурса тухас пулать. Вăрлăха пулĕмсенче (пурасенче) усрас пулсан, тырă купин çулĕшне 2—2,5 метртан иртерме юрамасть.

Вăрлăха пăсăлма парас мар тесен, ăна пĕрмаях тĕрĕслени кирлĕ: çĕнĕ тырра кашни кунах кайса тĕрĕслес пулать, кивĕ тырра икĕ-виçĕ кунра пĕрре тĕрĕслесен те юрать (кĕркуннепе çуркунне хăвăртрах, хĕлле сайрарах).

Вăрлăх хĕрнипе хĕрменнине пĕлме пурасенче кашни метртах термоштанг текен градусниклĕ шĕвĕр туясем лартса тухаççĕ. Термоштанг çук пулсан, ахаль йывăç е тимĕр туясем лартсан та юрать. Вара вĕсене вăхăчĕ-вăхăчĕпе пура тĕпĕнчен кăларса вĕсем вĕриленнипе тарланине сăнаса пăхаççĕ. Туясем вĕриленсе тарлани—вăрлăх вĕриленсе пăсăлма пуçланине пĕлтерет. Çавăнпа вара ун пек тырра пăтратса, машинăсем витĕр сăвăрса кăларса, тырă купин хуланăшне чакарса типĕтме тытăнас пулать

Çапла ялан тасатса, типĕтсе, пăсăласран сыхласа тăрсан çеç эпир государствăна, Хĕрлĕ Çара тата хамăра та кирлĕ тырпула хăйĕн пахалăхне чакармасăр пăхса усрама пултарăпăр, этемлĕхĕн тăшманне—фашизма çапса салатма та пулăшăпăр.

А. КОЛЬЦОВ.

Госсортфондăн агрономĕ.

ОТЕЧЕСТВЕННАЙ ВĂРÇА ФРОНЧĔСЕНЧЕН КИЛНĔ ЮЛАШКИ ХЫПАРСЕМ

Хаяр çапăçусем пыраççĕ

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, октябрĕн 28-мĕш. (ТАСС). Пирĕн фронтăн çурçĕр енчи участокĕнче ĕнер кунĕпех противникăн наступлени туса пыракан танкĕсемпе пехотине хирĕç йывăр çапăçусем пычĕç. Каç пулас умĕн немĕçсене пирĕн чаççене Л. пунктĕнче хĕсме май килнĕ, çак пунктра нумай кунсем хушши хаяр çапăçусем пынă пулнă. Хĕвеланăç фрончĕн ытти участокĕсенче пур çĕрте те совет войскисем контратакăсем туса пынă. Говоров командирăн чаçĕсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнисене сирсе пăрахса, Д. пункчĕ çине наступлени туса пынă. Пирĕн танксемпе мотопехота Д. пунктне кĕрсе кайса унăн Хĕвелтухăç енчи вырăнне йышăнса илнĕ. Çак операци вăхăтĕнче танк командирĕ, кĕçĕн лейтенант Фарапонов засадăра пулса нимĕçсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă. Противник Нара юханшывĕ урлă каçма тăнине сирсе пăрахнă. Голубов командирăн чаçĕсем Мало-Ярославец енче наступлени туса пынă. Çак наступление